ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ АДМИНИСТРАТИВЛĂ ПРАВĂНА ПĂСНИСЕМ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче административлă правăна пăснисем çинчен" 2003 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 22 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2003, 55 №; 2005, 62, 64, 65 №-сем; 2006, 69, 72 №-сем; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 75, 77, 78 №-сем; 2009, 81, 82 №-сем; 2010, 84, 86 №-сем; 2011, 88–91 №-сем; 2012, 92 (I том), 94, 96 №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7, 12 №-сем; 2014, 3, 6, 9, 11, 12 №-сем; 2015, 6, 10 №-сем; 2016, 3, 4, 10, 11 №-сем; 2017, 2–4, 7, 11 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2018, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕ, утă уйăхĕн 17-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 4-мĕшĕ, пуш уйăхĕн 25-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 3-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, утă уйăхĕн 1-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 22-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2023, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ,

0000000000000761 №; "Республика" хаçат, 2023, ака уйăхĕн 26-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) çакăн пек çырса 10^{10} статья хушса хурас:

"10^{10} статья. Халăх пурăнакан вырăнсен пурте усă куракан территорине кирлĕ пек пăхса тăманни

1. Халăх пурăнакан вырăнсен пурте усă куракан территорийĕсенче çӳп-çапа, çав шутра йăлари çӳп-çапа, строительство каяшĕсене, тимĕр-тăмăра, каснă йывăçсен, тĕмсен юлашкийĕсене, çавăн пекех çулçăна тата ӳсен-тăрансен ытти юлашкийĕсене муниципаллă тата хула округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çавăн валли ятарласа уйăрнă вырăнсен тулашĕнче Чăваш Республикинчи муниципаллă пĕрлĕхсен территорийĕсене тирпей-илем кĕртмелли правилăсемпе палăртнă требованисене пăсса пăрахнăшăн, купаласа хунăшăн тата (е) вăхăтлăха упранăшăн, Раççей Федерацийĕн Административлă правăна пăснисем çинчен калакан кодексĕпе пăхса хăварнă тĕслĕхсемсĕр пуçне, –

асăрхаттараççĕ е гражданссене – пĕр пин тенкĕрен пуçласа икĕ пин тенкĕ таран; должноçри çынсене – виçĕ пин тенкĕрен пуçласа пилĕк пин тенкĕ таран; юридически сăпатсене вунă пин тенкĕрен пуçласа çирĕм пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттереççĕ.

2. Çак статьян 1-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă административлă правăна тепĕр хут пăснăшăн –

гражданссене – виçĕ пин тенкĕрен пуçласа пилĕк пин тенкĕ таран; должноçри çынсене – вунă пин тенкĕрен пуçласа вун пилĕк пин тенкĕ таран; юридически сăпатсене вăтăр пин тенкĕрен пуçласа аллă пин тенкĕ таран административлă штраф тӳлеттереççĕ.";

2) 33 статьян 2-мĕш пайĕн "в" пунктĕнче:

а) пĕрремĕш абзаца "10^{9}," цифрăсем хыççăн "10^{10}," цифрăсем хушса хурас;

ă) пиллĕкмĕш абзаца "10^{1}," цифрăсем хыççăн "10^{10}," цифрăсем хушса хурас;

3) 34 статьян 2-мĕш пайĕн пĕрремĕш абзацне "10^{9}," цифрăсем хыççăн "10^{10}," цифрăсем хушса хурас.

2 статья

Çак Саккун 2023 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О.Николаев

Шупашкар хулли
2023 çулхи утă уйăхĕн 7-мĕшĕ
58 №